27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 14 ВЫРСАРНИКУН 95(6590) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракин чи ответлă тапхăрĕ

Çуракин чи ответлă тапхăрĕ пырать. Халĕ кашни кун кăна мар, кашни сехет хаклă. Çавăнпа та уяр тăракан тапхăрпа туллин усă курса, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен, трактористсемпе трактористкăсен фронтри пек ĕçлемелле.

Республикăри колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акассине анлăн туса пыраççĕ. Елчĕк, Красноармейски, Калинино, Чурачăк, Муркаш районĕсем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене çуррипе ытла акнă. Çак районсем çураки ĕçĕнче малта пыраççĕ. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн чăн та фронтри пек кĕрешеççĕ. Елчĕк районĕнчи ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем сухалама юрăхсăр, çумăрлă кунсенче уя 3.000 лава яхăн тислĕк кăларнă. Вăрнар районĕнчи «Волга» колхоз членĕсем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтернĕ хыççăн, çĕрулми лартма тата ытти хăшпĕр культурăсене акма юрăхсăррине кура, кĕр калчине тислĕк шĕвекĕпе иккĕмĕш хут апатлантараççĕ. Çак тĕслĕхсем вĕсем пирĕн колхозниксем хальхи вăхăтăн кашни сехечĕпе усă курнине кăтартаççĕ.

Çав вăхăтрах Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар районĕсенчи хăшпĕр колхозсем çумăр çăвать тесе, çуркуннехи ĕçсене тума чараннă. Шупашкар районĕнчи Вачалкасси Кадыков ячĕпе тăракан колхозра майăн 12-мĕшĕнче нимĕн те туман. Çак колхозри 2-мĕш бригадăри колхозниксем (бригадирĕ Малинов юлташ) хире те тухса пăхман.

Калас пулать, уйрăм районсем иртнĕ пилĕк кун хушшинче чăтма çук сӳрĕк ĕçлерĕç. Кувакино районĕ майăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕ хушшинче пурĕ те 388 гектар, Улатăр районĕ 413 гектар кăна акрĕç. Уйрăмах Йĕпреç, Первомайски, Çĕмĕрле тата Чкаловски районсем ĕç хăвăртлăхне чакарчĕç. Йĕпреç районĕ пилĕк кун хушшинче ĕçре 2,2 процент, Первомайски район 3,5 процент, Çĕмĕрле районĕ, 4,7 процент, Чкаловски район 4,6 процент кăна ӳсĕм турĕç. Первомайски районри колхозсем майăн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче 339 гектар кăна сухаланă. Çак районсен руководителĕсемпе колхоз правленийĕсем пĕр именсе тăмасăрах: тăпра ытла нӳрлĕ, ялан çумăр çурĕ, тесе ответлесшĕн. Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн директорĕ Шиккадинов юлташ: тракторсем ĕçлеймеççĕ, çумăр тăкать, — тесе ларать. Çавăн пек шухăш-кăмăлсемпе яшăх ĕçленине витме хăтланни пуриншĕн те паллă мар-и вара?

Çумăрлă çанталăкăн уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курса, Чурачăк, Муркаш тата ытти хăшпĕр районсем пĕр кун та ахаль лармарĕç, ака хăвăртлăхне ӳстерсе пычĕç. Муркаш районĕнчи колхозсем 2707 гектар сухаланă, пилĕк кун хушшинче 23,3 процент ӳсĕм тунă. Кунта кашни кунах вăтамран 541 гектар сухаласа акнă. Чурачăк районĕ те иртнĕ пилĕк кун хушшинче ака хăвăртлăхĕ енĕпе 2-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Паллах, ĕçе хăвăрт тунипе пĕрлех унăн пахалăхне те начарлатмалла мар. Вăрнар районĕнчи «Победа», «Волга» Ленин тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă, вăрлăхсене яровизациленĕ тата имçампа чӳхенĕ. Анчах уйрăм колхозсем агротехникăна пăснă тĕслĕхсем те пур-ха. Суракинче малта пыракан Муркаш районĕнчех, сăмахран, «Свобода» колхозра икĕ сеялкăпа усă курмаççĕ. Шупашкар районĕнчи Кадыков тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те алăпа акнă тĕслĕхсем пур. Агротехника мероприятийĕсене пурнăçласси — кулленхи ответлă ĕç. Ĕç пахалăхĕ пысăк тухăçлă тырпул анăçлăхне татса парать.

Куславкка районĕнчи «Заря», «Новый путь», Каганович ячĕпе тăракан колхозсенче те агротехникăна пăсаççĕ, хăмăл çинех акаççĕ. **Хăвăртрах акмалла, анчах ĕçе пахалăхлă тумалла.** Агротехникăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырасси — кашни колхозăн тĕп законĕ пулмалла.

Первомайски районри колхозсем çуракине хĕрӳллĕн тытăнчĕç пулин те, халь ĕçе вăраха тăсма тытăнчĕç, малтанхи хăвăртлăха çирĕплетсе хăварма пултараймарĕç. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Первомайски, Шăмăршă, Чкаловски районĕсем иртнĕ çулсенче те чăтма çук кая юлса пычĕç. Çак районсем иртнĕ çулхи йăнăшсене, çуракине вăрăма тăсни мĕнле сиен кӳнине халĕ те шута илмеççĕ-ха. Çакăн пек юлса пынин сăлтавĕ — районри руководительсем ĕç çине большевикла тимлĕхпе пăхманнинче. Çак районсен руководителĕсем çакăнтан çирĕп вывод тумалла, колхозниксен анлă массине çуракине анăçлăн иртерес ĕçе мобилизацилемелле.

Çумăрлă тата сивĕрех тăракан çанталăк малашнехи кунсенче те сураки ĕçне чăрмантарма пултарать. Çавăнпа та кашни сехетпе туллин усă курма тăрăшмалла.

Çуракине анăçлăн туса иртерессин халĕ туртăм вăйне — лашасемпе вăкăрсене, тракторсене тухăçлă ĕçлеттернинчен, колхозниксен пĕтĕм массине ĕçе пĕлсе организациленинчен килет. Ку тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи «11 лет Чувашии» колхозра Порфирьева трактористка аван тĕслĕхсем кăтартать. Вăл СТЗ маркăллă трактор хыçне лашапа ĕçлемелли 11 ретлĕ виçĕ сеялкă кăкарса ĕçлесе, кунне 15 гектар акас вырăнне 35 гектар акать. **Агрегата культиваторсем, сеялкăсем, сӳресем кĕртмелле. Тракторсен пĕтĕм хăвачĕпе туллин усă курмалла.**

Колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Çуракине агротехникăллă кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса иртерессишĕн кĕрешме колхозниксемпе колхозницăсен анлă массине явăçтармалла. Ĕçе звеносем тăрăх йĕркелесси тата звеносенче уйрăм сдельщинăпа ĕçлесси кашни колхозрах пуриншĕн те çирĕп йĕрке пулса тăмалла. Çапла ĕçлесен кăна социализмлă ăмăрту кирлĕ пек сарăлса пыма пултарать.

Партипе комсомол тата совет органĕсем массăллă ăнлантарулă ĕçе анлăн сарса ямалла. Вĕсен колхозниксен массисемпе куллен пĕрле пулса, социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пымалла.

Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерӳсем туса пырать. Тăшмана çĕнтерес сехет хăвăртрах çиттĕр тесе, фронтпа тăван çĕршыв валли тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли — чĕртавар ытларах туса парассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр, фронтри пек тăрăшса ĕçлер!

Çуракине иртерес ĕçре ăнăçлă, тухăçлă та паха ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районри совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

1. **Красноармейски МТС-ри хĕрарăмсен трактор бригади** (бригадирĕ Николаева юлташ), çак бригада çуракинче тракторпа тумалли ĕçе 100,5 процент тултарнă, 500 килограмм горючи перекетленĕ. **Мефодьева, Никифорова, Федотова**, тата Николаева трактористкăсем сменăра 5 гектартан пуçласа 7 гектара çити сухаланă.
2. **Çĕрпӳ МТС-ĕн трактор бригади** (бригадирĕ **Т. С. Степанов** юлташ). Çак бригада çуркунне тракторпа тумалли ĕçĕн планне 101 процент пурнăçланă.

Çураки планне тултарнă трактор бригадисем

Красноармейски тата Çĕрпӳ МТС-ĕсенчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ патне телеграммăсем килнĕ.

Красноармейски МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Николаева, помощникĕ Григорьева юлташсем), Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çураки планне 100,5 процент тултарнă, 500 килограмм горючи перекетленĕ. Малта пыракан трактористкăсем Мефодьева, Никифорова, Федотова тата Николаева трактористкăсем сменăра 5—7-шер гектар сухалаççĕ.

Çĕрпӳ МТС-ĕн 10-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Т. С. Степанов, помощникĕ П. Н. Маслов юлташсем) майăн 12-мĕшĕнче çуракинчи ĕç планне 101 процент тултарнă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ çак тава тивĕçлĕ трактор бригадисенче ĕçлекенсене çĕнтерӳ ячĕпе сывлăх сунса тав тунă, малалла та çапла çĕнтерӳллĕ ĕçлеме сĕннĕ.

5 колхоз акса пĕтернĕ

СĔНТĔР, майăн 13-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районра ака ĕçĕ юлашки кунсенче уйрăмах анлăн сарăлса кайрĕ. Паян «1905 год», «Ким», Киров, Фрунзе тата Мичурин ячĕсемпе тăракан колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтерчĕç.

«1905 год» колхоз (председателĕ Елагин юлташ) тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Халĕ çĕрулми вырăнĕсене сухалаççĕ тата лартма та тытăннă. Колхоз вăрлăх участокĕсем çине тырра пĕтĕмпех яровизацилесе, имçамсемпе чӳхесе акнă. Кунта кашни икĕ касăллă плугпа кулленех 1,25 сухалас вырăнне вăтамран 1,30 сухаланă.

Киров ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче юлса пынă, кăçал вăл МТС-ран пулăшу илмесĕрех 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Çак çитĕнĕве вĕсем, чăн малтанах ĕçе пĕлсе организациленипе тата туртăм вăйĕпе туллин усă курнипе пула тунă. Лашасене уйрах тăрантарнă. Колхозниксем ĕçе ирхине 3 сехетре тухса, каçхине 10 сехетре кăна таврăннă. Колхозниксем ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçленĕ.

М. КАРПОВ.

Колхозниксем ĕç нормине 140—150 процент тултараççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 13-мĕшĕ. **(Телефонпа).** «Красноармеец» колхоз майăн 1-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене акса пĕтернĕ. 40 гектар çине вăрлăхсене яровизацилесе акнă, вăрлăхсен нумай пайне имçампа чӳхенĕ. 132 центнер çĕрулмине яровизацилеме хывнă.

Сухаçăсем М. Степановăпа З. Якимова юлташсем кулленхи нормăна 40—50 процент ирттерсе тултарнă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра 60-шар çулхи Даниловпа Евдокимов юлташсем те нормăна 130—140 процент тултарса ĕçленĕ. Колхоз тырăсене майăн 7-мĕшĕ тĕлне акса пĕтернĕ.

Вăйлă тырпул звенисем тырă акса пĕтерчĕç

ЕЛЧĔК, майăн 12-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районĕпе 13 колхозра вăйлă тырпул звенисене комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Звеносем пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яни çураки ĕçне ăнăçлăн туса пыма пулăшрĕ. Чылай звеносем хăйсен участокĕсем çинче ака ĕçне вĕçлерĕç.

«Осоавиахим» колхозри вăйлă тырпул звенине комсомол организацин секретарĕ Клавдия Соловьева юлташ ертсе пырать. Звенора пĕтĕмпе 12 çамрăк (вĕсенчен 9-шĕ комсомолецсем). Çак звенона колхоз уйрăм лашасем, транспорт инвентарĕсем çирĕплетсе панă, 24 гектар çĕр уйăрса панă.

Çамрăксем уйхир ĕçне лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Акмалли çĕре çемçетмешкĕн вырăнти удобренисем чылай тăкрĕç, тĕрлĕрен çумкурăксемпе хăмăлсене тасатрĕç. 12 гектар çинчи кĕрхи калчасене кайăккĕшĕк тата тислĕк шĕвекĕпе апатлантарчĕç. Çамрăксен звени кăçал 12 гектар çине сĕлĕ акрĕ.

Ака вăхăтĕнче В. Семенов, В. Скворцов комсомолецсем кунсерен 1,35—1,40 гектар сухаларĕç. Акаçă комсомолец И. Орлов юлташ нормăна кулленех ирттерсе тултарчĕ. Звено членĕсем халь ирхи çĕртме тумалли участок çине тислĕк тăкаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри çамрăксен звени те вăйлă тырпулшăн тимлĕн кĕрешет. ВЛКСМ организацин секретарĕ Якимов юлташ звенона тивĕçлипе ертсе пырать. Звено хăйĕн участокĕ çине кăçал тулă тата сĕлĕ акса хăварчĕ.

Звенора пĕтĕмпе 13 çамрăк. Вĕсенчен 8-ăшне çуракинче кăтартуллăн ĕçленĕшĕн колхозри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Районри ытти вăйлă тырпул звенисем те çавсем пекех пархатарлă ĕçлеççĕ.

А. ПАВЛОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Сеялкăсем ахаль тăраççĕ

МУРКАШ, майăн 13-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Кашмашри «Свобода» колхозăн çуртырисем 490 гектар акса хăвармалла. Майăн 12-мĕшĕ тĕлне 130 гектар (вăл шутран сеялкăсемпе 33 гектар) кăна акнă.

Колхозра 4 сеялка. Иртнĕ кунсенче вĕсемпе ĕçлемерĕç. «Ун чухне çĕр чĕрĕ, акма май çук» тетчĕç вĕсем. Юлашки кунсенче çĕр те кушăхрĕ ĕнтĕ, сеялкăсем çапах ĕçлемесĕр тăраççĕ. Майăн 12-мĕшĕнче 2 сеялка çеç ĕçлерĕ. Тепĕр иккĕшĕпе бригадир лашасем уйăрса паман пирки ĕçлеймен.

Сеялкăсемпе туллин усă курман пирки акасси сухалассинчен юлса пырать. 200 гектар сухаланă çĕр акăнмасăр выртать.

«Свобода» колхозра Сĕнтĕр МТС-ĕн икĕ тракторĕ ĕçлеççĕ. Дискăллă сӳресем çук пирки, тракторсем сухаланă хыççăн акса пыраймаççĕ. Малтан сухаласа сӳрелеççĕ те кайран тин акма тытăнаççĕ. Çапла ĕнтĕ икĕ хут ытла горючи пĕтереççĕ. Трактор сеялки хыççăн йывăç сӳресем кăна кăкарнă та лайăх сӳрелемеççĕ. Иртнĕ çулхи клевер тымарĕсен муклашкисем çаплипех выртса юлаççĕ.

— Иртнĕ çулта клевер пулнă уя тракторпа акнă хыççăн тепĕр хут лашапа сӳрелеме тивет, — тет колхоз агрономĕ Панфилов юлташ.

Т. ИВАНОВ,
(Хамăр корр.).

Шкул ачисем колхоза пулăшаççĕ

Первомайски районри Пӳртлĕри шкулта вĕренекенсем «Ударник» колхозра çуракине ăнăçлăн ирттерме хастарлăн пулăшаççĕ. Акмалли 10 гектар çĕре иртнĕ çулхи çумкурăксемпе кивĕ улăмсенчен тасатнă. Çак агротехникăллă мероприятие малалла та туса пыратпăр.

И. ЕНДИН.

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ капитан Иван Васильевич Яшин.

Совет Союз Геройĕн ятне И. В. Яшин капитана СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, хăйĕн боецĕсемпе пĕрле Днепр шывĕн сылтăм енне чи малтан ăнăçлăн каçса кайса, ирсĕр тăшмана паттăррăн çĕмĕрнĕшĕн панă.

И. В. Яшин юлташ Пăрачкав районĕнчи Бахмутово ялĕнче çуралса ӳснĕ, Хĕрлĕ Çара кайиччен çав районрах Никулино ялĕнчи туллимар вăтам шкулта учитель пулса ĕçленĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДНЕСТР шывĕн сылтăм енчи плацдарм çинче, ТИРАСПОЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем пуçласа янă темиçе атакăна сирсе янă, тăшмана çынсемпе техникăна тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Икĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсен 100 танкне çити çĕмĕрсе тăкнă. Тăшманăн, виллисене кăна шута илсен те, 4.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

КРЫМРА Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем ХЕРСОНЕС сăмсахĕ районĕнче тăшман çарĕсен юлашкийĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 45 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 32 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛЮБЛИН ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

Майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Люблин чугун çул узелне йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине тата çар складĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Чугун çул узелĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Узелăн вăтаçĕртри пайĕнчи складсен районĕнче темиçе вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн 2 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Темиçе кун каярах Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет Совет правительствинчен çапла тума ыйтнă: Совет Союзĕнче тыткăнра пурăнакан французсене, Германи çарĕнчен хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар енне куçнăскерсене, пуринчен те ытларах Эльзаспа Лотарингире пурăннисене, француз çарне илмешкĕн Çурçĕр Африкăна яма ыйтнă.

Совет правительстви Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн çак ыйтăвĕпе килĕшнĕ, советсен çар влаçĕсене çав ĕçе пурнăçлама кирлĕ кăтартусем панă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри пĕр участокра тăшманăн пĕр батальона çити пехоти разведка тума хăтланнă. Пĕр часри боецсем атака пуçласа янă нимĕçсене флангран пырса çапнă та нимĕçсен каялла тарма лекнĕ. Çак çапăçура гитлеровецсен 2 ротине пĕтерсе тăкнă, чылайĕшне тыткăна илнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман ирхине ирех каллех пирĕн Днестр шывĕн сылтăм енчи позицисене атакăлама тытăннă. Нимĕçсем çапăçăва хăйсен пехотине танкĕсен пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Пирĕн пехотинецсем тата артиллеристсемпе бронебойщиксем, авиаци пулăшнипе, тăшман атакисене сирсе янă. Кăнтăрла иртсен, нимĕçсем хăйсен танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен çĕнĕ вăйĕсене илсе пырса, çапăçăва кĕртсе янă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Совет гвардеецĕсем тăшманăн хăйсенчен йышлă вăйĕсем хĕснине хăюллăн та питтĕррĕн чарса тăнă. Тăшман нимĕнле çитĕнӳ те тăвайман, унăн вăйĕсене çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсен 40 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 11 туппине çĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçа нимĕçсен 23 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕрти уйрăм батальонăн çыранри батарейисем нимĕçсен хăвăрт çӳрекен баржине шыва путарнă, çав баржа Петсамо портне кĕрсе кайма хăтланнă пулнă.

* * *

Латыш партизанĕсен «Фашизма вилĕм» ятлă отрячĕ советсен [illegible] тыткăнри [illegible] çар çыннисемпе мирлĕ çынсен лагерьне сыхлакан гитлеровецсене сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсен хуралне пĕтерсе тăкнă та лагерьти çынсене ирĕке кăларнă. Нимĕç влаçĕсем партизансене хирĕç карательнăй экспедици янă. Совет патриочĕсем çав экспедицине çапăçма пуçланă, 40 гитлеровеца вĕлернĕ, ыттисем вара тарнă. Çак кунсенче çав отрядри партизансемех нимĕçсен икĕ çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Венгерсен 37-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Денеш Чупор çапла каласа кăтартнă: «Эпир фронта тухса килнĕ чухне казармăсем патĕнче хĕрарăмсем йышлăн пухăнса тăчĕç. Вĕсем йĕре-йĕре çапла каларĕç: «Нимĕçсем Венгрие çаратаççĕ, эсир фронта каятăр. Ан кайăр, кунтах юлăр, нимĕçсем хăйсем вăрçчăр». Фронтра пире приказ вуласа пачĕç, приказра салтаксем тунă преступленисемшĕн мĕнле айăпласси çинчен каланă. Унта çапла çырнă: приказа итлеменшĕн — персе пăрахмалла, çапăçу хирĕнчен тата çартан тарнăшăн — персе пăрахмалла, хĕçпăшала çухатнăшăн — персе пăрахмалла, вут чĕртнĕшĕн — персе пăрахмалла, саботаж тунăшăн—персе пăрахмалла, нимĕç çарĕн салтакĕсене хурланăшăн — персе пăрахмалла. Вара мĕнпур салтаксемпе офицерсене вĕсене çак приказа вуласа кăтартни çинчен алă пустарчĕç. Нимĕçсен командованийĕ, çавăн пек çирĕп тыткаласа, Венгри салтакĕсене нимĕçсене пăхăнтарса тăма хăтланать».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 86-мĕшпе 87-мĕш номерĕсенче).

54. Мухамед Михайлович **Хусанова** — слесарĕ.
55. Иван Степанович **Черныха**—газосварщике.
56. Борис Тевелевич **Шейнцвита**—мастера.
57. Алексей Игнатьевич **Шигашева** — мастера.
58. Иван Степанович **Шутова** — электрика.
59. Роман Константинович **Ялунова** — старши мастера.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕ.

Ĕçе хăвăрт та паха тăваççĕ

ВĂРНАР. Уравăшри «1-ое мая» колхоз уйхирĕнче ака ĕçĕ хĕрӳллĕн пырать. Çулпуç приказĕпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа, хăвăрт тăвассишĕн вăй хураççĕ.

— Пирĕн задача — кăçал гектартан 17 центнер тĕштырă, 150 центнер çĕрулми, 200 центнер пахча-çимĕç тата пăрça йышши культурăсем 16 центнертан кая мар туса илесси. Эпир панă сăмаха пурнăçлатпăрах, — тет колхоз председателĕ Я. Васильев юлташ.

Обязательствăсем пĕчĕк мар. Уншăн чылай вăй хурса ĕçлемелле. Çапла ĕçлеççĕ те çакĕ Уравăшсем. Кунĕпе ĕçленĕ хыççăн касхине бригадирсем колхоз канцелярине пуçтарăнса кулленхи ĕçĕн итогĕсене сӳтсе яваççĕ. Ака, 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Я. Улюшкин сухаçăсем тăрăшса ĕçлени çинчен калать. Пĕр кун хушшинче 3 сухаçă 4 гектара яхăн сухаланă.

4-мĕш бригадăн бригадирĕ Т. Судуков юлташ çамрăк сухаçăсем Г. Абросев, М. Сидюхин, М. Яковлев çурçĕр иртсен икĕ сехетре ĕçе тухни çинчен пĕлтерет. Вĕсем кашниех хăйсен нормисене 130 процент таран тултараççĕ. Ĕç пахалăхĕ лайăх, 17—18 сантиметр тарăнăш сухалаççĕ.

Х. ЛИСИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 85-мĕш, 92-мĕш тата 94-мĕш номерĕсенче).

17. Сергей Николаевич **Пайманова**—Кипечкасси ялсоветĕн председательне.

18. Михаил Прокопьевич **Смелова** — «Парижская Коммуна» колхозăн председательне.

19. Мария Васильевна **Толстовăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

20. Ксенофонт Федорович **Федорова**—районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.

21. Ольга Васильевна **Шишкинăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

КАЛИНИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Петр Александрович **Александрова** —«Клевер» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

2. Варвара Алексеевна **Алексеевăна**—«Новая жизнь» колхозăн дояркине.

3. Егор Васильеивч **Васильева** — «Клевер» колхоз председательне.

4. Николай Владимирович **Владимирова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадин бригадирне.

5. Алексей Александрович **Воробьева** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн агрономне

6. Пелагея Григорьевна **Григорьевăна** — «Клевер» колхозăн пчеловодне.

7. Алексей Емельянович **Емельянова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

8. Спиридон Ильич **Журавлева** — «Трактор» колхозăн председательне.

9. Сабир Зубаирович **Зубаирова** — Калинин ячĕпе тăракан колхозăн сурăх пăхаканне.

10. Василий Иванович **Иванова** — «1-ое Мая» колхозăн председательне.

11. Данил Степанович **Казакева** — Калинин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

12. Агния Кирилловна **Кирилловăна**—«Клевер» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

13. Варвара Леонтьевна **Леонтьевăна**—«1-ое Мая» колхозăн колхозницине.

14. Терентий Иванович **Малова** — Пушкин ячĕпе тăракан колхозăн тимĕрçине.

15. Анна Мартыновна **Мартыновăна**—«Комсомолец» колхозăн свинаркине.

16. Игнатий Матвеевич **Матвеева** — Киров ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадин бригадирне.

17. Иван Николаевич **Николаева** — Киров ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

18. Федор Павлович **Павлова**—Киров ячĕпе тăракан колхозăн машиноведне.

19. Федор Павлович **Романова**—ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.

20. Ксения Антоновна **Скворцовăна** — Каганович ячĕпе тăракан колхозăн дояркине.

21. Мария Ивановна **Симоновăна** — Ленин ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадин бригадирне.

22. Михаил Тимофеевич **Тимофеева** — «Коминтерн» колхозăн конюхне.

23. Кузьма Федорович **Топрикова** — «Знамя труда» колхозăн конюхне.

24. Матвей Федорович **Федорова** — «Броневик» колхозăн председательне.

25. Михаил Федорович **Федорова** — «Знамя труда» колхозăн председательне.

26. Парасковья Павловна **Черновăна**—«Новая жизнь» колхозăн дояркине.

27. Анастасия Кузьминична **Ястребовăна** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

КАНАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Осип Амбросьевич **Амбросьева** — «Акатуй» колхозăн председательне.

2. Екатерина Анисимовна **Анисимовăна** — Буденный ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

3. Людмила Асколоновна **Асколоновăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

4. Анна Борисовна **Борисовăна** — «Красное пламя» колхозри уйхир бригадин бригадирне

5. Андрей Васильевич **Васильева** — «Красное пламя» колхозăн председательне.

6. Егор Васильевич **Васильева** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.

7. Николай Данилович **Данилова** — Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн тимĕрçине.

8. Андриан Герасимович **Долгова** — ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.

9. Мария Анисимовна **Доронинăна** — «Торгплодоовощĕн» типĕткен заводĕнчи рабочие.

10. Таисия Евдокимовна **Евдокимовăна** —Киров ячĕпе тăракан колхозăн дояркине.

11. Ясон Иванович **Иванова**—«Мотор» колхозăн садоводне.

12. Феодосия Даниловна **Козловăна** — Киров ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.

13. Иван Кондратьевич **Кондратьева**—районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.

14. Илья Кондратьевич **Кондратьева**—Доронин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.

15. Федор Спиридонович **Косова** — машинно-тракторнăй мастерскойĕн шлифовальщикне.

16. Иван Александрович **Мартынова**—«Канаш» колхозăн председательне

17. Анна Петровна **Мышеловăна** — Молотов ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.

18. Василий Николаевич **Николаева**—машинно-тракторнăй станцин трактористне.

19. Елизавета Николаевна **Николаевăна** — «Динамо» колхозăн сурăх пăхаканне.

20. Игнатий Павлович **Павлова** — «Динамо» колхозăн старши конюхне.

21. Анна Николаевна **Руссковӑна** — «Коммунар» колхозăн пахча-çимĕç бригадин бригадирне.

22. Николай Васильевич **Селиванова**—«Канаш» колхозăн ферма заведующине.

23. Евдокия Никифоровна **Скворцовăна** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн кĕтӳçине.

24. Феврония Тимофеевна **Тимофеевăна** —«Вторая пятилетка» колхозăн ферма заведующине.

25. Григорий Федотович **Федотова** — «Чуваш ЦИК» колхозăн председательне.

26. Мария Филипповна **Филипповăна**—Доронин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

27. Ефим Архипович **Ярандайкина** — «Идея Ленина» колхозăн председательне.

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Елена Артемьевна **Артемьевăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

2. Анастасия Архиповна **Архиповăна** —«Красная Чувашия» колхозăн свинаркине.

3. Андрей Афанасьевич **Афанасьева** —«Красная Чувашия» колхозăн ферма заведующине.

(Малалли пулать).

Лашасене чуптармалли кампание ăнăçлăн ирттерер

Лаша ялхуçалăхĕнче вăрçăчен те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, лаша ялхуçалăхĕшĕн кăна мар, Хĕрлĕ Çаршăн та пит кирлĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ лашасене чуптармалли кампани ответлă та паха ĕç пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ, 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановленире çапла каланă: «Лашасен шутне хăвăртрах ӳстерес тесе, 1943 çултан пуçласа колхозсенчи, совхозсенчи, çавăн пекех предприятисемпе учрежденисенчи 3 çултан иртнĕ, хăмлама пултаракан кĕсресене пурне те чуптармалла».

Çак постановление пурнăçласа пырса, Сĕнтĕр, Элĕк, Калинино районĕсенчи колхозсем иртнĕ, 1943 çулта, кĕсресене чуптармалли плана тултарчĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ çак районсем лашасене ĕрчетмелли плана çулсеренех пурнăçласа пычĕç.

Чкаловски, Первомайски, Шăмăршă, Вăрмар районĕсенчи колхозсем вара 1943 çулта лашасене чуптармалли плана пурĕ те 70—83 процент таран кăна тултарчĕç, çав вăхăтрах чуптарнă кĕсресенчен 48—52 процентĕ кăна хăмланă. Çавăнпа та тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ, çак районсем çулран çулах лашасене ĕрчетмелли плана тултараймаççĕ, мĕншĕн тесен чуптару кампанине вĕсем кирлĕ пек хисепе хумаççĕ.

Çак районсенче 1943 çулта кĕсресем сахал хăмлани пĕтĕмпех çак ĕç çине çиелтен пăхнинчен, чуптару правилисене кирлĕ пек пурнăçламаннинчен килнĕ. Кĕсресен чупас кăмăлĕ пуррине вăхăтра сăнаман, кĕсресене чуптармалли пунктсене вăхăт иртсен тин илсе пынă. Хăйăрсен пахалăхне тĕрĕслемен тата вĕсем чуптару вăхăтĕнче кирлĕ пек самăр пулман. Ырхан кĕсресене чуптарас умĕн канма тăратман, чуптарма хатĕрлемен. Çак сăлтавсем пирки кĕсресем сахал пĕтĕленнĕ, хĕсĕр юлнисем ытларах пулнă. 1943 çулта чуптарнă кĕсресенчен 10.000 пуçа яхăн пĕтĕленмен, çапла вара чуптару кампанине кирлĕ пек хатĕрленмен пирки кăна пирĕн колхозсем нумай пин тиха илеймерĕç.

Чуптару кампанине кирлĕ пек хатĕрленсе кĕтсе илес, ăна лайăх ирттерес тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕ нумаях пулмасть ятарласа постановлени йышăнчĕ, çак постановленире çĕрĕç органĕсемпе райсовет исполкомĕсене чуптару планне вăхăтра та лайăх пурнăçа кĕртмелле тума хушрĕ.

Калинино, Элĕк, Етĕрне, Вăрмар тата ытти хăшпĕр районсем лашасене чуптармалли кампание кирлĕ пек хатĕрленчĕç. Чуптару пункчĕсен заведующийĕсене хатĕрлерĕç, ырханланнă кĕсресене канма тăратрĕç, çавăн пекех йăйăрсене те тĕрĕслерĕç. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне Калинино районĕнчи колхозсенче — 192, Вăрмар районĕнче — 272, Етĕрне районĕнче 188 кĕсрене чуптарнă. Элĕк районĕнче пĕр йăхри йăйăрсемпе кĕсресем ан пĕтĕçчĕр тесе, колхозсем вĕсене пĕрпĕрнпе улăштарнă. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхозри чуптару пункчĕн заведующийĕ Поляков юлташ 20 кĕсрене лайăх пăхса чуптарса хăварнă.

Анчах та калас пулать, республикăри нумай колхозсем чуптару кампанине пуçăнман-ха. Вĕсен шутне Кувакино, Чкаловски, Советски, Йĕпреç районĕсенчи колхозсем кĕреççĕ. Çав районсен руководителĕсемпе колхоз правленийĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмеççĕ-ха. Иртнĕ çул Кувакино районĕнчи колхозсем 100 кĕсререн пурĕ те 9 тиха кăна илсе çитĕнтерчĕç.

Ака ĕçĕсем хĕрсех пыраççĕ, çылай кĕсресем халĕ хăмланă. Кĕсресене çак уйăхра чуптармалла, мĕншĕн тесен ир чуптарнă кĕсресен тихисем кĕркунне вăй илсе хĕле кĕреççĕ.

Лашасене чуптармалли кампани ответлă ĕç. Хăш чухне кĕсресене пĕтĕленччĕр тесен 5—6 хут ытла та чуптарма тивет. Чылай сăлтавсем пирки кăçал чуптару кампанийĕ иртнĕ çулсенчинчен йывăртарах условисенче иртет. Лашасем кăçал ырхантарах тата вĕсемпе ытларах ĕçлемелле. Ун пек чухне кĕсресем час пĕтĕленмеççĕ, вĕсен чупас кăмăлĕ пуррине те часах туйса илме çук. Çавăнпа та кĕсре хăмланă хыççăн 5—6 кунтанах йăйăр кăтартса сăнаса пăхмалла.

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозри чуптару пункчĕн заведующийĕ Пайманов юлташ кĕсресене яланах сăнаса тăрать. Çавăнпа та вăл 5 çул хушшинче 37 кĕсререн 37 тиха илнĕ, вĕсене лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Чуптару вăхăтĕнче Пайманов юлташ кĕсресене йăйăр патне илсе тухса сăнать. Чуптарнă хыççăн та сăнасах тăрать, кĕсре татах ыйтать пулсан, татах чуптарать.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ районри çĕрĕç пайĕсене чуптару кампанине ирттерес пирки конкретнăй мероприятисен планне тата вĕсене мĕнле пурнăçламаллине кăтартса пачĕ. Çав кăтартусене бригадирсен, ездовойсен тата конюхсен канашлăвĕсенче сӳтсе-явмалла. Чуптармалли пунктсен спискине тата хăш колхоза ăçта çирĕплетнине райисполкомсем пăхса тухмалла, чуптару пункчĕсен заведующийĕсене райисполком ларăвĕнче çирĕплетмелле.

Чуптару кампанийĕ хальхи вăхăтра питех те пысăк вырăн йышăннине шута илсе, çак ĕçĕн ответлăхне колхоз председателĕ çине хумалла.

3 çултан иртнĕ хăмлама пултаракан мĕнпур кĕсресене чуптарса хăвараççишĕн тăрăшса ĕçлемелле. Районри зоотехниксемпе ветеринарсен çак ĕçре колхозсене пур майсемпе те пулăшмалла, чуптару кампанийĕ тавра ăнлантарулла ĕçе сарса ямалла, çак ĕçе хисепе хуман колхоз, совхоз е предприятипе учреждени руководителĕсене ответ тыттармалла.

И. ТРОИЦКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятийĕсен тата промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕсен артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вырăнти промышленность предприятийĕсен ăмăртăвĕнче Кувакинăри райпромкомбинат (управляющийĕ Лукьянов, райсовет исполкомĕн председателĕ Ларионов) мала тухнă. Вăл апрель уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 160,1 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 167,6 процент тултарнă, çапла вара продукци туса кăларассине апрель уйăхĕнче 10 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Кувакинăри райпромкомбината памалла тунă. Унсăр пуçне ăна ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа уйăрса панă.

Çавăнпа пĕрлех Чăваш АССР Совнаркомĕ ăмăртура палăрнă промкомбинатсене: Тăвай райпромкомбинатне пĕрремĕш преми — 10.000 тенкĕ, Улатăр хулинчи промкомбината иккĕмĕш преми — 5.000 тенкĕ памалла тунă.

Апрель уйăхĕнче Вăрнар, Ишлей, Канаш, Калинино, Куславкка, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Пăрачкав, Çĕрпӳ, Чкаловски райпромкомбинатсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Промысла кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Ăстакассинчи «Лесоруб» артель (правлени председателĕ Корнилов, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин) мала тухнă. Вăл апрель уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 230,2 процент тата куллен кирлĕ таварсем енĕпе 245,1 процент тултарса, планран ирттерсе 61,2 пин тенкĕлĕх продукци панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ăстакассинчи «Лесоруб» артельтех хăвармалла тунă тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа уйăрса панă.

Социализмлă ăмăртура палăрнă Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Шупашкар хулинчи Куйбышев ячĕпе тăракан артеле пĕрремĕш преми — 10.000 тенкĕ, Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Сĕнтĕр районĕнчи «Дружба» артеле, тата Швейпромсоюз системине кĕрекен Улатăрти «Красная швея» артеле иккĕмĕш преми — 5.000-шер тенкĕ памалла тунă.

Апрель уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Чăвашпромсоюз системине кĕрекен Шупашкарти «Металлист», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Парижская Коммуна», Канашри «Авангард» тата Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» артельсем; Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Улатăр районĕнчи Çĕнĕ Эйпесри, Канашри Сталин ячĕпе тăракан, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Камайри, Первомайски районри Кивĕ Эйпесри тата Шупашкарти «Лесхимартель»; Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан тата Чăваштарпромсоюз системине кĕрекен Шупашкар районĕнчи Çĕньял Уйкас артелĕсем.

Инвалидсен кооперацийĕн артелĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкарти «Чебторгин» артель (председателĕ Мицына, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин) мала тухнă. Вăл апрель уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 127,4 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 136,7 процент тултарнă. Çапла вара, продукци кăларассине апрель уйăхĕнче 27,3 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри «Красный воин» артельтен илсе, Шупашкарти «Чебторгин» артеле памалла тунă. Унсăр пуçне ăмăртура палăрнă работниксене премилеме ăна 15.000 тенкĕ награда панă.

Канашри «Красный воин» артеле ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ уйăрса панă

Апрель уйăхĕнче Сĕнтĕр районĕнчи «Производственник», Çĕмĕрле районĕнчи «Партизан», Йĕпреç районĕнчи «Помощь» тата Улатăр хулинчи «Союз инвалидов» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

* * *

Чăваш АССР Совнаркомĕ апрель уйăхĕнче çак промкомбинатсемпе артельсем начар ĕçленине палăртнă: Элĕк, Йĕпреç, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Советски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăмăршă, Шăхасан, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи промкомбинатсем; Чăвашпромсоюз системине кĕрекен артельсем—Шупашкарти «Утильсырье», Элĕк районĕнчи «Самолет», Кувакино районĕнчи «19 лет Октября», Вăрмар районĕнчи «Универсал»; Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен артельсем — Комсомольски районри Осипенко ячĕпе тăракан тата «Заря», Первомайски районри Ленин ячĕпе тăракан, Шупашкарти «Леспромартель»; Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен артельсем—Пăрачкав районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи «Пограничник», Шупашкарти «Красный кустарь»; инвалидсен кооперацийĕн системине кĕрекен артельсем — Улатăр районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи «Трудовик», Первомайски районри «Передовик», Пăрачкав районĕнчи «Новый путь», Шупашкар районĕнчи «Парижская Коммуна» артельсем.

Чăваш АССР Совнаркомĕ промкомбинатсемпе промысла коопераци союзĕсен руководителĕсене, райсовет исполкомĕсен председателĕсене кая юлса пыракан промкомбинатсемпе артельсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тататăх мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

А. П. Чехов вилнĕренпе 40 çул çитнине уявласси çинчен

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, вырăссен аслă писателĕ Антон Павлович Чехов вилнĕренпе 40 çул çитнине уявласа ирттерме Пĕтĕм Союзри комитет тунă.

Комитетра çаксем тăраççĕ: В. П. Потемкин (председатель), Н. С. Тихонов (председатель заместителĕ), О. Л. Книппер-Чехова (председатель заместителĕ), И. Г. Большаков, В. В. Вересаев, А. М. Герасимов, Ф. В. Гладков, Р. М. Глиер, А. Ф. Горкин, А. М. Еголин, Ю. А. Завадский, В. И. Качалов, Л. Киачели, В. Л. Комаров, Якуб Колас, Е. П. Корчагина-Александровская, М. В. Куприянов, П. Н. Крылов, Л. М. Леонов, И. М. Москвин, Н. Я. Мясковский, П. А. Павленко, В. М. Петров, Д. А. Поликарпов, М. М. Пришвин, М. Ф. Рыльский, А. С. Серафимович, С. Н. Сергеев-Ценский, Н. А. Соколов, Н. Д. Телешев, А. Н. Толстой, Е. Д. Турчанинова, Н. П. Хмелев, М. Г. Храпченко, В. Я. Шишков, М. А. Шолохов,

А. П. Чехов вилнĕренпе 1944 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче 40 çул тултарать. Пĕтĕм Союзри Комитет çав вăхăт тĕлне А. П. Чехов ятне ĕмĕрлĕхе паллă туса хăварма кирлĕ ĕçсене хатĕрлесе хурать. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Япони тыткăнри американецсем патне Владивостокра выртакан посылкăсене илсе çитерме килĕшнĕ

ВАШИНГТОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви паян радиопа пĕлтерни официальнăй сынсене кăмăла кайнă. Çав пĕлтерӳ тăрăх, Япони Швейцарис çакăн çинчен пĕлтернĕ: Япони хальхи вăхăтра Владивостокра выртакан посылкăсене тыткăнри американецсем патне илсе çитерме ирĕк парать, тенĕ. Япони çулталăк ытла чăрмантарса тăнă хыççăн хăйĕн позицине мĕн пирки улăштарма килĕшнине çав сынсем ăнлантарса параймань. Анчах пĕр паллă чиновник калана тăрăх, совет правительстви японецсене çавăн пек тума канаш парса ĕнентернĕ пулмалла. Государственнăй секретарь Хэлл январĕн 12-мĕшĕнче официальнăй йĕркепе çапла каланă пулнă: Америка правительстви японецсем хăйсем патĕнче тыткăнра турăнакан пур американецсем патне те посылкăсем яма ирĕк парĕç тесе шанса тăрать, тенĕ. Хэлл 1943 çулхи мартран пуçланнă калаçусен мĕнпур тапхăрĕсене тата совет правительстви çак ĕçре американецсемпе пĕрле ĕçленине кăтартса панă.

БОЛГАРИРЕ ПĔТĔМĔШЛĔ МОБИЛИЗАЦИ ТУСА ИРТТЕРЕÇÇĔ

СТАМБУЛ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, майăн 6-мĕшĕнче Болгарире пĕтĕмĕшле мобилизаци пуçланнă. Мобилизацие арми округĕсем тăрăх темиçе тапхăр туса ирттереççĕ. Хальхи вăхăтра Болгарин 1-мĕш, 2-мĕш тата виççĕмĕш армийĕсене мобилизацилеççĕ. 20 çул хушшинче çуралнă сынсене чĕнеççĕ. Болгари правительстви йышăннă тăрăх, çав мобилизацие официально пĕлтермесĕр туса ирттереççĕ, ăна çуллехи переподготовка йĕркипе пухнă пек туса вăрттăн ирттереççĕ. Кунсăр пуçне, мĕнпур чугун çулсене, автомобилсене тата лаша транспортне мобилизацилеççĕ.

Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, çак мобилизацие Болгари регентчĕ нумаях пулмасть Гитлер ставкине кайса укăпа тунă килĕшӳ тăрăх ирттереççĕ. Çав килĕшӳ тăрăх, Германи Болгари правительствине хальхи мобилизацилекенсем валли винтовкăсемпе пулеметсем тата артиллери пĕрлак пама пулнă.

ФИНЛЯНДИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ЫЙТĂВĔ МĔНЛЕ ТĂРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен «Арбетарбладет» ятлă хаçачĕ Финляндире апат-çимĕç ыйтăвĕ мĕнле тăни çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. «Пирĕн ĕç çапла пулассине кĕтсе тăмалла, — тесе çырать хаçат: — ют çĕршывсенчен апат-çимĕç илсе килесси йывăрланма пултарать, мĕншĕн тесен Европăра лару-тăру хăвăрт улшăнса кайма пултарать. Германин апат-çимĕç министрĕ нумаях пулмасть çапла каларĕ: кăçал апат-çимĕç тĕлĕшпе Германин йывăрлăхсем ытларах пулĕç, терĕ. Германие апат-çимĕç парса тăрас ĕçре Украина чылай пысăк вырăн йышăнса тăнă, халĕ вăл Германи аллинчен тухса ӳкрĕ. Апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пирĕн пурнăç нумай йывăртарах пулса тăма пултарать».

ОККУПАЦИЛЕНĔ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ ГЕРМАНИ МĔН ЧУХЛĔ ПУРЛĂХ ÇАРАТСА ИЛНИ

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Экономикăллă вăрçă министерствин парламентри секретарĕ Фут общинăсен палатинче çапла каланă: Германи Францирe, Бельгире, Голландире, Данире, Чехословакире тата Югославире вăрçă контрибуцийĕпе тата ытти майсемпе 5 миллиард та 800 миллион кĕрепенкĕ стерлинг чухлĕ укça пухса илнĕ.

ТИНĔÇ ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин тинĕç министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Англин çăмăл карапĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче Германин патруль карапĕсен пысăк соединенийĕпе çапăçма тытăннă. Нимĕçсен пĕр хĕçпăшаллă тральщикне шыва путарнă, икĕ тральщикне вăйлă сиенленĕ.

Англи карапĕсем кăшт çеç сиенленнĕ, пурте каялла тавраннă.

Суднăсен караванне сыхласа пынă «Спей» фрегат нумаях пулмасть Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнче нимĕçсен икĕ подводнăй лодкине путарнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, майăн 10-мĕшĕнче Англин йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Францире Бельгири чугун çул сооруженийĕсене тапăннă.

Майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем каллех Францире Бельгири чугун çул объекчĕсемпе ытти вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔН ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министрĕ Синклер паян общинăсен палатинче çапла пĕлтернĕ: Англипе США-н сывлăш-çар вăйĕсем вăрçă пуçланнăранпа сывлăшра Германипе Италин 26.000 самолетне пĕтернĕ.

АНГЛИПЕ ПОРТУГАЛИ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНУСЕМ

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Экономика вăрçи министерствин парламентри секретарьне Фута паян палатăра çакăн пек ыйту панă: Португали правительстви Германие вольфрам ярса тăрас тĕлĕшпе кăмăллă позици йышăнса тăмасть пулин те, Англи правительстви Португалие çĕркăмрăк парса тăма шутлать-и? тенĕ. Фут çапла каланă: Азор утравĕсем пирки тунă килĕшӳ тăрăх, Англи правительстви Португалие 1944 çулхи июнĕн 30-мĕшĕчен çĕркăмрăк парса тăмалла, çав срок иртсен вара çак ыйтăва çĕнĕ условисене шута илсе тепĕр хут пăхса тухмалла пулать, тенĕ.

Ответлă редакторăк заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РСФСР Наркомземĕн Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳ тата мелиораци техникумĕ

çĕрйĕркелӳ отделенийĕпе гидротехника отделенийĕн 1-мĕш курсĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет. Техникумăн пысăк квалификациллĕ педагогика кадрĕсем, лайăх вĕренӳ кабинечĕсем, пысăк библиотека, апат-çимĕç бази, столовăй тата çĕнĕрен кĕнисене вырнаçтармалăх общежити пур, общежитире выртса тăмалли вырăнсем пур.

Гидротехника отделенийĕ гидротехниксене вĕрентсе кăларать. Çĕрйĕркелӳ отделенийĕ çĕр йĕркелекен техниксене вĕрентсе кăларать. Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене илеççĕ. Вĕренме кĕрекенсен туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлмелле. Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Марпосад, ЧАССР, ул. Ленина, 3, Техникум Землеустройства и Мелиорации. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ, 2) хăçан çуралнине кăтартакан справка, 3) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 4) тĕрĕсленĕ автобиографи.

Заявленисене майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен илеççĕ. Августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çитиччен çак предметсемпе испытани пулать: математика, вырăс чĕлхи, СССР Конституцийĕ. Испытанире туллимар вăтам шкулăн программи тăрăх ыйтаççĕ.

1942, 1943, 1944 çулсенче туллимар вăтам шкултан «отлично» паллăпа вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене техникумăн 1-мĕш курсне испытанисĕрех илеççĕ. Вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăн параççĕ тата стипенди параççĕ.

1944 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вĕрентме тытăнаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти пир-авăр техникумĕ çынсене вĕренме йышăнать.

Пĕрремĕш курса вăтам шкулăн 7—8-мĕш класĕсенче вĕренсе тухнисене, иккĕмĕш курса — 9—10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Техникумра техникума кĕме хатĕрлекен курс уçнă, унта укçасăрах вĕрентеççĕ. Çав курса вăтам шкулăн 6—7-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Курс май уйăхĕнче ĕçлеме тытăнать.

Заявленисене техникум çуртĕнче куллен (канмалли кунсемсĕр пуçне) 16 сехетрен пуçласа 22 сехетчен илеççĕ.

Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, Новая ул., 22. (Женская школа № 2). Телефон — 6—86. 2—1.

Чăвашпотребсоюзăн хатĕрлев управленине районсенче кайăк-кĕшĕкпе çăмарта комбиначĕсенче ĕçлеме старши бухгалтерсем кирлĕ. Хваттер параççĕ. Комбинатсенче столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Театральная, 1/5, Управление заготовок Чувашпотребсоюза. 2—1

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи Управленин ОРС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: подсобнăй хуçалăх заведующийĕ, старши товаровед, старши плановик, бухгалтер.

Адрес: гор. Чебоксары, Дом связи, 3-й этаж, ком. № 3. Телеф. 1—17.

„Госснабсбытăн" Чăваш республикинчи отделенине главнăй бухгалтер кирлĕ. Хваттер параççĕ. Çак адреспа ыйтмалла: г. Чебоксары, Красная площадь, 19, Росснабсбыт. 2—1.

Шупашкарти çăкăр комбинатне васкавлăн кассир, счетовод тата экономист кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: г. Чебоксары, Ул. Аптечная, 4.

Февралĕн 13-мĕшĕнче Çĕрпӳ хулинче кĕсре çухалчĕ. Паллисем: 1941 çулта çуралнă, тĕсĕ—çутă тура, çӳллĕшĕ вăтам, çуни-мĕнĕпех çухалнă. Пĕлекенсене Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнкĕр ялсоветĕнчи „Чуваш ЦИК" колхоза пĕлтерме ыйтатпăр.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00131 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. ..42 п. л. Тираж 11.400 экз.